Василий Давыдов-Анатри

**Çĕршыв-аннемĕр, эп санпа…**

Çынна мухтарăм юррăмра,
Тус-тантăшсем, сиртен юлмарăм.
Вăй-халăм хĕрчĕ çулăмра,
Атте-анне ятне ямарăм.

Хама çуратнă çĕршывра
Çирĕпленсех пырать тымарăм.
Телей эп тупрăм туслăхра,
Ăна ĕçпе, чунпа упрарăм.

Çĕршыв-аннемĕр, эп санпа
Хам сассăма парса утатăп,
Хăватлă, аслă халăхпа
Çĕн самана çуртне тăватăп.

*Давыдов-Анатри, В. Çĕршыв-аннемĕр, эп санпа / В. Давыдов-Анатри / Юррăмсем-çунатăмсем : сăвăсем / В. Давыдов-Анатри. – Шупашкар, 1997. – С. 5.*